Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение
«Эльбарусовская средняя общеобразовательная школа»
Мариинско - Посадского муниципального округа
Чувашской Республики

# «Халăх сăмахлăхĕ»

Составитель: Сарбаева О.Г.,
учитель родного языка и литературы

д.Эльбарусово, 2023 г

**Урок теми: «Халăх сăмахлăхĕ»**

**Тĕллевсем:**

1). «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» темăна вĕреннине пĕтĕмлетесси, «фольклор» сăмах пĕлтерĕшне уçса парасси.

2) ачасен пуплевне аталантарасси ,

3) тăван чĕлхене юратма хавхалантарасси.

**Задачăсем:**

«Халăх сăмахлăхĕ» ăнлава çирĕплетесси; «Халăх сăмахлăхĕн» жанрĕсене тишкересси; тăван чĕлхен хитрелĕхне кăтартасси, кĕнекене юратма хăнăхтарасси, вуланине тĕслĕхсемпе çирĕплетме хăнăхтарасси;

Çĕнĕ технологисемпе усă курасси (ушкăнпа е пĕччĕншерĕн ĕçлеме вĕрентесси);

Ачасн пуплевне, тавракурăмне, тимлĕхне, шухăшлавне, аталантарасси; пĕр-пĕрин ĕçне хаклама хăнăхтарасси; хăйсен шухăш-туйăмне итлекене пĕлтерме вĕрентесси;

**Вĕренӳ мелĕсем:**

кăткăс ыйту, калаçу, диалог, текста тишкересси, илемлĕ вуласси, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлени, тĕпчесе тишкерни,;

**Вĕренӳ меслечĕсем:**

Калаçу, шыраса тупасси, тĕпчесе тишкерни, кăткăс ыйту хуравне тупасси;

**Кирлĕ хатĕрсем:**

Ачасем тунă укерчĕксенчен йĕркеленĕ «Юмах ятăм, юптартăм» выставка- презентаци, юмах кĕнекисен выставки,«Ваттисен самахĕсем» проект ĕçĕ, музыка инструменчĕсем( çăпала, шакăртма,бубен,параппан). Компьютер.

1. Урока йĕркелесси:

Ачасем чăваш тĕрриллĕ кĕпесемпе, учитель те чăваш тумĕпе.

2. Урок темине,тĕллевне пĕлтересси.

Шăнкăрав сас пачĕ урока чĕнсе,
Пĕтĕм класс шăпланчĕ парта хушшинче.

- Паян урока тĕлĕнмелле арча илсе килтĕм. Ахаль арча мар вăл, асамлă. Пăхăр-ха мĕнле хитре !

-Мĕн пур-ши унта? Арчара мĕн упраççĕ? (ахах-мерчен, хаклă япаласем..)

- Ку арчара мĕнсем-ши? Сирĕн пĕлес килет-и?

-«Халăх самахлăхĕ» тесе çырнă. Мĕн çинчен калаçăпăр урокра, эсир чухларăр-и?

-Халăх сăмахлăхĕ шутне мĕнсем кĕреççĕ? (юмахсем, халапсем, юптарусем, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, юрă-такмаксем, шӳтсемпе сăвăсем, халăх сăнанисем хăвăрткаларăшсемпе сăмахçаврăнăшсем (фразеологизмсем), çут çанталăка сăнанисем тата ыттисем те. Арчи пĕчĕк кăна, анчах кунта темĕн те пур.

Ман çĕршыв- çĕр пин юр çĕршывĕ,

Калаçать вăл çĕр пин сăмахпа.

Ман çĕршыв- чăн юмах çĕрĕ-шывĕ,

Иксĕлми вăй-хăватлăн сывлать.

3. -Пуçлар-ха арчана пăтратма. «Юмахсем» лекрĕç.

- Ачасем,эсир юмахсем итлеме юрататăр-и? Пĕлетĕр-и?

-Юмахсем мĕнлисем пулаççĕ? (автор юмахĕсем, халăх юмахĕсем)

-Автор юмахĕ тесе мĕнлисене калаççĕ?(И. Яковлев йĕркеленĕ юмахсем , Лапшу çтаппанĕн «Сунарçă юмахĕсем, И Шухлин «Кăранташпа шăши» юмахĕ тата ыт.

-Халăх юмахĕсене кам çырнă? (Ачасем ăнлантараççĕ. )

_Чăваш халăхĕ çав тери ĕçчен, ăслă. Юмахсене, юрăсемпе сăвăсене пултаруллă ăстасем шухăшланă. Анчах хут çине çырса хума хутла пĕлмен, пĕри теприне, тепри урăххине кала-кала панă. Авторĕ кам пулни те манăçнă, çавăнпа вĕсене халăх сăмахлăхĕ теççĕ. Халăх хывнă çак пуянлăха ФОЛЬКЛОР теççĕ. Фольклор сăмах акăлчан челхинчен кĕнĕ сăмах – «ХАЛĂХ ĂСТАЛĂХĔ» тенине пĕлтерет.

-Содержани тăрăх юмахсем менлисем пулаççĕ? (чĕр чунсем çинчен, йăла юмахесем, асамлă юмахсем)

-Йала юмахесем тесе мĕнлисене калаççĕ? (Йалара, çынсен пурнăçĕнче пулса иртекен ĕçсем çинчен) Эсир пĕлетер-и ун пек юмахсене? (Чее тилĕ, Çĕвĕç, Асамат кĕперĕ, Ăслă хĕр, Çĕр синче мĕн вăйлă?, Çил ачисем, Пуйма каякан – вилсе килнĕ, Ухмах Йăван. Улăппа супетей)

-Асамлă юмахсем çинчен мĕн калатăр? (Ку юмахсенче асамлă ĕçсем пулса иртеççĕ) Ылтăн шăллă хĕр, Уйăх çинчи хĕр, Йăван)

-Класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче эсир нумай юмах вуларăр, килĕшнĕ юмахсем тăрăх ўкерчĕксем турăр. Паллаштарăр-ха пире вĕсемпе?

_ Ачасем , ячĕ мĕнле ку юмахăн?

4. Асамлă арчана татах пăхса илĕр-ха. Мĕн пур-ши унта тата?

Ĕçлекеншĕн нихăçан та çитмест, юлхав çыншăн ытлашши (вăхăт)

Урасăр утать, алăсăр шаккать (çил)

-Ачасем, кусем мĕнсем? (тупмалли юмахсем)

Шывра çуралать, шывран хăрать. (пăс)

Çунатлă – вĕçмест, ури çук –хуса çитме сук. (пулă)

Вĕçет – чĕнмест, выртать – чĕнмест, вилсен –шавлать, чарăнма пĕлмест. (юр)

Малтан йăлтăркка, кайран калтăркка (çиçĕмпе аслати)

Мана çынсем кĕтеççĕ, эп килнине курсанах пурте тарса пĕтеççĕ. (çумăр)

-Хале эсир пер-перинчен ыйтăр.

-Маттур, ачасем! Эсир нумай пĕлетĕр.

5. –Манăн каллех çак арчана пăхас килет, тата мĕн пур-ши унта? (арчана уçса « Ваттисен сăмахĕсем»тесе çырнине кăларать)

-Эсир ваттисем вĕрентсе каланă сăмахсене те нумай пĕлетĕр пуль-ха. Халĕ эп сире конвертсем паратăп,унта ваттисен самахĕсем. Анчах вĕсене пăтраштарса пĕтернĕ, сирĕн тĕрĕс вырнаçтарса йĕркелеме тивет. (çурмалла уйăрнă пайсене тупса йĕркелеççĕ)

- Кăшт ăмăртса илер-ха. Хăш ушкăн хăвăртрах ĕçлет?

( ĕçе пĕтерсен ваттисен сăмахĕсене черетпе вуласа параççĕ)

| | |
|---|---|
| ВĔРЕННИ - ÇУТĂ, | ВĔРЕНМЕННИ - ТĔТТĔМ. |
| ĔМĔР ПУРĂН, | ĔМĔР ВĔРЕН. |
| ТĂВАН ÇĔРШЫВ СЫВĂ ПУЛСАН, | ТĂВАН ЙĂВУ ТА ПУЛĔ САН. |
| ÇАМРĂКЛА ВĔРЕННИ - ЧУЛ ÇИНЧЕ, | ВАТĂЛЛА ВĔРЕННИ - ЮР ÇИНЧЕ. |
| ĔÇ ТĂРАНТАРАТЬ, | КАХАЛ ПĂСАТЬ. |
| КАХАЛШĂН – ÇĔР КĔСКЕ, | ĔÇЧЕНШĔН КУН КĔСКЕ. |
| УЙ КУÇЛĂ, | ВĂРМАН ХĂЛХАЛЛĂ. |
| ĔÇРЕН АН ХĂРА, | ВĂЛ ХĂЙ САНРАН ХĂРАТĂР. |

| | |
|---|---|
| ВАТТА СУМА СĂВАКАН - | ХĂЙ ТЕ ЫРĂ КУРАКАН. |
| ВЫÇСАН ÇĂКĂР ТА | КУЛАЧĂ ПУЛАТЬ. |
| ЧĔЛХӲПЕ АН ВАСКА, | ĔÇӲПЕ ВАСКА. |
| ĔÇЧЕНĔН ĔÇ НУМАЙ, | КАХАЛĂН СĂМАХ НУМАЙ. |

-Мĕнле шутлатăр,кирлĕ-ши пурнăçра ваттисен сăмахĕсене пĕлни?

(вĕсем пире мĕнле пулмаллине вĕрентеççĕ, тĕрĕс мар ĕçсем тăвасран чараççĕ)

6. – çавăн пекех чăваш халахĕн сăмах çӳпçинче шахвăртса каланă сăмахçаврăнăшсем те нумай. Вĕсене усă курни калаçăва илемлетсе пуянлатать, ăс-тăна çивĕчлетет.

«Куç хупса иличчен» тени мĕне пĕлтерет? (питĕ хăвăрт);

«Чикĕ тăршшĕ лартрĕ» - суйса хăварчĕ;

«çӳпçипе хупăлчи пек» - пĕр пек, пĕр майлă;

«Тӳр пилĕклĕ» -кахал;

«Кукăр алăллă» - вăрлама юратать

«Хура-шурне нумай курнă» - начар пураннă,нумай инкек туснĕ;

«Пуçĕнче çил вылять»- тĕплĕ шухăшлама пĕлмест, çăмăлттай.

«çăвара шыв сыпнă пек ларать» -нимĕн те чĕнмест

-маттур, ачасем!

7. –Пирĕн пĕчĕк арчара татах сăмах нумай-ха. Юрă-сăвăсем, шӳтсемпе такмаксем. Халĕ вĕсене аса илер-ха.Вайă карти тăвăпăр. Чăваш юррисене итлесе ытти халăхсем те тĕлĕннĕ. Акă мĕн каланă чăвашсен пурнăçне тĕпченĕ , вĕсене хӳтĕленĕ вырăс хĕрарăмĕ Алесандра Фокс 1840 çулта « Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии» ятлă алçырăвĕнче: «чăваш тĕлĕнмелле талантлă. Хирпе пырать – хир çинчен юрлать, вăрманпа пырать –вăрман çинчен юрлать»

Юрă: «Итлĕр куккук сассине»

Вĕçсĕр сăвă: - Атя пичче пасара. - çăпату çук.

-Пичче, çăпата туса пар. - Пушăт çук.

-Пушăт ăçта? - çăкара.

-çăка ăçта? -Вăрманта.

-Вăрман ăçта? -Йăлăмра.

-Ма каймастăн йăлăма? Лашам çук

-Лаша ăçта? - Пасарта.

-Атя, пичче, пасара . -çăпату çук.

Шўтлĕ сăвă:

-Хăш ялсем? -Карапашсем.

-çуну синче мĕн пур? - Кăркка.

-Майĕ вăрăм-çке. - Аçи.

-Ами ăçта? - Ампарта.

-Чĕппи ăçта? - Тинĕсре.

-Лашу ырхан-çке. - çул хура.

-Пахчунта мĕн ўсет? - Купăстапа кăшман.

-Вăйлă-и? - Мĕн вăйлине калан.

- Катăк кутлă качака кĕнĕ, çинĕ кайнă.

Тытрăм та пусрăм,

Пĕр ампар аш пулчĕ.

-Ампарĕ пĕчĕк пуль? - Мĕн пĕчĕккине калан,

80 салтак вырнаçать.

-Салтакĕсем пĕчĕк пуль? - Мĕн пĕчĕккине калан,

Пĕр хуран пăтă çитмест.

-Хуранĕ пĕчĕк пуль? -Мĕн пĕчĕккине калан,

Пĕр кўлĕ шыв çитмест .

-Кулли пĕчĕк пуль? - Мĕн пĕчĕккине калан,

Урлăш – 60 хăлаç,

Сарлакăш -80 хăлаç.

Витлемелли сăвăсем: Нина- Нинават, ĕне хўри саламат.

Вăйă: «çерем ватса вир акрăм».

Чăваш ташши: Тӳнкки- тӳнкки параппане

çапмасарах тӳнклетет.

Эпир вăййа тухсассăн та

çич çухрăмран илтĕнет.

Юрă: «Хурăн çулçи çурăлсан..»

8. –Чăваш халăх сăмахлăхĕн арчи çав тери пуян. Ахаль мар чăваш çĕр-шывне çĕр пин сăмах, çĕр пин тĕрĕ, çĕр пин юрă çĕр-шывĕ теççĕ. Вĕсем пире пурăнма вĕрентсе, ăс парса пыраççĕ.

« ФОЛЬКЛОР»- ХАЛĂХ АСТАЛĂХĔ.

-Паян урокра пурте маттур пултăр. Уйрăмах шӳтлĕ сăвăсем калакансем манна килĕшрĕç. Ваттисен сăмахĕсене те нумай пĕлетĕр иккен эсир. Тавтапуç!

Наташа Ф.:

Пурнăçра ăçта кăна çитместĕн,

Пур çĕрте те маншăн пархатар.

Хам чăваш пулнишĕн вăтанмастăп,

Эс те ,тусăм, ху камне ан ман !

-Урока Л.В.Мартьянова сăмахĕпе вĕçлес килет:

«Эп кайран,

Темиçе çĕр çултан.

Ман мăнукĕн мăнукĕ

Ман ума килессе,

Чăвашла пуплесе

Ĕненетĕп!»